Çур акире технологие кам епле пăхăнни куç умне тухрĕ

# Хамăр ĕççене пĕрле хак патăмăр

Сисмерĕмĕр те, черетлĕ çур аки хыçа юлчĕ. Мĕнпе палăрчĕ тата асра юлчĕ вăл Муркаш ен хресченĕшĕн? Çулпа çул пĕр килменнине кашниех ăнланатпăр-ха, анчах пурпĕрех хамăр туса çитерейменнине час-часах çумăрлă е шăрăх çанталăк çине йăвантарса ответлăха айккинелле сиретпĕр. Хӳре вĕçне туй килсен вара йывăрлăхсен пĕтĕм сăлтавне ютра шыратпăр, анчах ... хамăрта мар.

Çĕртме уйăхĕ ума тухрĕ. Урамра çулла. Апла пулин те иртнĕ çур аки паян та куç умĕнчех: ял хуçалăх техникине (тракторсемпе прицепсем) техосмотр тăратни, çĕр пулса çитессе кĕтнĕ кунсем, паянхи ĕçе ырана хăварасран сыхланса иртен пуçласа каçчен хирте ĕçлени, ĕç вăйĕ çитсе пыманни, техника ванса кайни т. ыт. те. Апла-и, капла-и, анчах районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем çурхи ака-суха ĕçĕсен планĕсене туллин пурнăçлама тăрăшрĕç. Ума лартнă тĕллевсем пурте пурнăçланчĕç-и? Пулас тухăçăн никĕсне çирĕп хывса хăвартăмăр-и? Çак ыйтусем çине хурав пама июнĕн 1-мĕшĕнче шуратса хăварнă уй-хирсене пăхса тухса ĕçсен пахалăхне хакласси иртрĕ.

***КĔСКЕ СПРАВКА.***

**Çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе агрофирмăсем, чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 11 пин гектар çуртрисем, 1406 гектар пĕр çул ӳсекен курăксем, 29 гектар выльăх кăшманĕ, 1541 гектар «иккĕмĕш çăкăр», 23 гектар пахча çимĕç, 280 гектар силослăх культурăсем акса-лартса хăварчĕç. 6752 гектар çинчи кĕрхи культурăсенчен 3900 гектарĕ хĕл сиввисемпе пĕтни те çур аки ĕçĕсен калăпăшне ӳстерчĕ кăна.**

Хаклава хутшăнакансем район тăрăх икĕ ушкăна пайланса тĕрĕслев ирттерчĕç. Кашни хуçалăхăн уй-хирĕсенчех пулчĕç вĕсем. Каламалла, типĕ çанталăк тăрать пулсан та технологие пăхăннисен хирĕсенче ешĕл калча пысăк тухăçа шантарса кашласа ӳсет. Вĕсен хирĕсенче калчана шăтма чăрмантаракан кунтăк пек тăпра муклашкисем те, чылай ӳссе кайнă çум курăкĕ те курăнмаççĕ. Вăл хирсене пăхсан çĕр ĕç культури пуш сăмах пулманни курăнать. Кунта Суворов яч. хис. хуçалăхăн тĕп агрономĕ Г. Албутова калани пысăк пĕлтерĕшлĕн туйăнчĕ.

– Пысăк тухăç пирки калаçнă чух эпир час-часах çĕр ĕç культури пирки манса каятпăр. Тырă вăрлăхне çĕре варăнтарнипе кăна тухăç пулмасть. Кунта паха вăрлăхпа ĕçлени, пусă çаврăнăшне пăхăнни, çĕре акма-лартма агротехнологие пăхăнса хатĕрлени тата ĕççене вăхăтра пурнăçлани кĕрет. Эпир çак ĕççене кăçал нихăшне те хăй еккипе кайма памарăмăр. Манăн сăмахсем суя пулманнине паян хуçалăхри кирек-хăш хире тухсан та курма-ĕненме пулать, – терĕ вăл пĕр ыраш хутăшĕсĕр кашласа ӳсекен кĕрхи тулă пуссине алăпа кăтартса.

Уй-хир куравĕ çак кун чылай ыррине, технологие пăхăнсан юмахри пек пуртăран та апат пĕçерме май пуррине, паянхи ĕçе ырана хăварни мĕн патне илсе çитернине тата малашне çак çултан пăрăнмаллине кăтартрĕ. Акă паян «Оринино», «Восток», «Свобода», «Ударник», «Передовик», Ильич яч. хис., Суворов яч. хис., А. Толстов, В. Бархаткин, В. Горбунов хресчен (фермер) хуçалăхĕсен уй-хирĕсем пысăк тухăç шантараççĕ пулсан, ыттисенчен çакна кĕтме йывăртарах. «Передовик» хуçалăх кăçал çур аки ĕçĕсене «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин пулăшăвĕпе ирттернĕрен кунти хирсене кăçал пачах урăх сăн кĕнĕ: калчасене юман пек пиçенсемпе чăрăш пек чăрăш тăррисем картласа хуман, «иккĕмĕш çăкăр» пуссинче çĕр улми вăрлăхĕ чылай çĕрте çиелтех юлни çук. Çĕнĕлĕхсене тăтăш ширамасан нимĕнле наци проекчĕ те пирĕ тутă тăваймĕ.

Çумпа паян химилле майпа кĕрешмеллине кашни ертӳçĕпе агроном пĕлет. Анчах... Уйхир тишкерĕвĕ пулнă кун тĕлне чылай хуçалăхра гербицид сапас ĕçе пуçăнманччĕ те. Ку ĕçе вăхăтра пурнăçлани «Восток», «Оринино», «Герой», «Ударник», Чапаев яч. хис. хирĕсене паян тирпейлĕх ытамне кĕртсе ӳкернĕ. Асăннă кун тĕлне ку ĕçе 546 гектар çинче пурнăçланăччĕ. Кунпа пĕрлех «иккĕмĕш çăкăр» пуссинче ретсем хушшине чĕрессине «Восток», «Свобода», «Оринино», Ильич яч. хис. хуçалăхсенче, «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра, С. Сретинскийпе В. Бархаткинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 400 гектар ытла пурнăçланăччĕ.

Вăхăтра акнă-лартнă культурăсем паян пĕр тикĕс ӳсеççĕ, пысăк тухăç шантараççĕ. Хресчене паян ытларах хумхантараканни – çумăр çукки.

– Паян камран мĕн вĕренмеллине хамăр куçпа куртăмăр. Малашлăха пăхаканшăн мĕнрен асăрханмалли те алă тупанĕ çинчи пекех. Хăваршăн паллă пулнă хирсене хуçалăхри механизаторсене илсе кайса кăтартни те вĕсемшĕн пысăк урок пулмалла, малашлăхпа пурăнсан çакăн çине алă сулманни те ытлашши пулăм мар. Паян акă «симĕç ĕç çи» пуçланчĕ. Суворов яч. хис. тата Чкалов яч. хис. хуçалăхсем нумай çул ӳсекен курăксене çулма тухрĕç. Сисмĕпĕр те вырма çитĕ. Çавăнпа та кашни ĕçе вăхăтра пурнăçласси тăтăш кун йĕркинче пулмалла, – терĕ пĕтĕмлетӳ тунă май район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов.

– Хĕл ыйхинчен вăраннă хыççăнхи пĕрремĕш утăмсене пĕтĕмлетни никамшăн та ытлашши пулчĕ тесе калаймăн. Ку питĕ выранлă мероприяти. Çĕр ĕçĕнче вăй хуракансем пурте пĕрле пулсан çеç умри йывăрлăхсене çĕнме пултарăпăр. Пирĕн урăхла çул çук, – терĕ «Ударник» хуçалăхăн ертӳçи Платон Павлович Давыдов.

Уй-хир хуçисем хăйсен ĕçне пĕрле пулса хаклани пирĕн çĕр ĕçченĕ шав малалла пăхнине çирĕплетет.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕн, ял хуçалăх пайĕн ертӳçин В. Калининăн агрономсемпе сӳтсе явмалли чылай.**



**«Свобода» хуçалăхăн тĕп инженерĕ И. Скворцов кăçал туяннă универсаллă диск агрегачĕпе («УДА-3,1) паллаштарать. Çĕр ĕçĕнчи кашни çĕнĕлĕх – пулас тухăç патне тунă утăм.**



**Агрономсем ĕççене пĕтĕмлетнĕ май калчасем епле шăтни çине пысăк тимлĕх уйăрчĕç.**



**Технологие пăхăнса ĕçленĕ çĕрте лайăххăх çав...**

Республика кунне халалласа

# Завод çĕкленни асрах

**Чăваш автономине туса хунăранпа 90 çул çитнĕ май çак çулсен аталанăвне тĕпе хунисемпе тĕл пулса калаçма питех те кăмăллă. Çав ветерансем хăйсен ĕçне паянхи пурнăç виçипе пăхаççĕ те алă-урасенчи сыпăсен ыратăвне çĕнсех çĕнтерӳçĕ салтаксем пек куçран пăхса йăвашшăн кулаççĕ. Вĕсен куçĕнче хăйсем пурнăçланă ĕçшĕн мăнаçланни, паянхи яш-кĕрĕме те ӳсĕм çулĕпе ĕçлеме чĕнни...**



Халăхăмăршăн паллă кун умĕн Муркашри кирпĕч завочĕн малтанхи утăмĕсемпе интересленсе Хура тăпраллă мар зонăри агропромстройăн тава тивĕçлĕ строителĕпе тĕл пулса калаçма çула тухрăм.

Оринин ял тăрăхĕнчи Пиккикасси ялĕнче пурăнакан Прокопьевсен тĕлне çитсенех тавралăх илемĕ кунта пурнăç тутине курнă, тирпейлĕх ыйтăвне мала хуракан çынсем пурăнни куç умне пулчĕ. Тĕреклĕ те тирпейлĕ хуçалăх.

Çак кунсенче тивĕçлĕ канăва тухакан Георгий Федорович тин кăна Муркашри кирпĕч заводĕнчен киле таврăннă. 30 çул ытла çакăнта трактористра ĕçлекенскер сывлăхĕ хавшанăран юлашки çулсенче хуралта тăрать тата платник ĕçĕсене пурнăçлать.

– Хамăн пĕтĕм ĕмĕрĕме кирпĕч заводне патăм та унта каймасан темĕн çитмен пек, кун çухалнă пек туйăнать, – терĕ завод ертӳçисен ырă кăмăлăхне мала хурса мана алă панă май куçран пăхсах ырă кăмăллă арçын. Паллашрăмăр. Çак вăхăтра вăл мăнукне алла илнĕ май мăшăрĕпе хĕрне кукăль пĕçерме, сĕтел çине чей хатĕрлеме ыйтрĕ.

Калаçса кайрăмăр. Ветеранăн аса илĕвĕ республикăмăр 90 çул тултарнă май тăван кирпĕч завочĕ çинче вăй илчĕ.

Опрыскъялĕнче çуралса ӳснĕ каччă шкул хыççăн механизатора вĕренсе тухать те тăван яла тракторист пулса ĕçлеме таврăнать. Совет Çарĕнче службăра пулнă хыççăн Гера 2 çул тăван ялта тракторпа та, комбайнпа та ĕçлет. Çĕр ĕçне чунĕпе парăнма ĕлкĕрнĕ çамрăка Опрыскъяльпе Шетмĕпуç колхозĕсем пĕрлешсен мехпарк тăван килтен 6 çурăма куçсан вăл вăхăтри пылчăклă çулпа çӳресси колхоз ĕçĕнчен сирнĕ. Çапла вара 22 çулхи каччă 1972 çулта Шупашкар урлă кайса Муркашри кирпĕч заводне çитсе моторист пулса çĕнĕ ĕçе вырнаçать.

– Пĕрремĕш кирпĕч тухнине астăватăп. Епле савăнтăмăр ун чух! Заводăн техника енчен ун чух, паянхи пек астăватăп, нумай алтăрлă экскаватор, икĕ ЗиЛ-130 самосвал тата ДТ-74 трактор пулса. Кирпĕч çапма кирлĕ тăма Атăл леш енчен кӳрсе килнĕ брикет çунтарса ăшăтса илеттĕмĕр. Ун чухне кунне 5-6 пин кирпĕчрен ытла кăларса курман. Малтанхи вăхăтра юрăхсăр кирпĕчсем е ванчăк тăм муклашкисем нумай тухатчĕç. Вĕсене вара наççилккасемпе урама йăтаттăмăр, – каласа парать ун хыççăнхи çулсенче ытларах тракторпа ĕçленĕ Георгий Федорович Прокопьев.

Мăшăрĕпе те вăл кирпĕч завочех паллашнă. Пиккикассинче çуралса ӳснĕ хĕр Зинаида Александровна 1968 çулта никĕсленнĕ завода тума 1969 çулта пырса кĕнĕ.

– Завода хамăр никĕс ярса çĕклерĕмĕр. Малтанхи кирпĕчсене те хамăр вăйпах çапса кăлартăмăр. Ун чухнехи техника та, механизаци те паянхинчен питĕ аякра тăратчĕ. Заводрах штукатур-маляра вĕренсе тухрăм. 1976 çулччен заводра ĕçлерĕм те хамăра валли пӳрт тума пуçласан тепĕр ĕçе куçрăм. 10 çул «Моргаушская» МСОра вăй хутăм. Пĕрлехи тăрăшулăхпа 1980 çулта хамăр ята пӳрт лартрăмăр, – пирĕн калаçăва хутшăнса каласа парать кил хуçи хĕрарăмĕ сĕтел çине пиçсе тухнă кукăле вырнаçтарса.

Хĕрпе ывăл çуратса ӳстернĕ мăшăр ачисене те ĕçе юратма воспитани панă. Алексей паян «Оринино» хуçалăхăн Атапайри производство участокĕн ертӳçи, Алина вара амăшĕн пенси умĕнхи ĕç çулне малалла тăсса «АвтоВас» предприятин Муркашри автовокзалĕнче билет кассирĕ пулса ĕçлет. Хăйсем тимленипе тата ашшĕ-амăшĕ тĕкĕ панипе вĕсем иккĕшĕ те аслă пĕлӳ илнĕ.

– Республика аталанăвне эпир хамăр çемье çулйĕрĕнчен те куратпăр. Пирĕн вăхăтрах ырă улшăнусем халăх хуçалăхне самай малалла ячĕç, – пулчĕç хамăр калаçăва республика кунĕпе вĕçленĕ май Зинаида Александровнăпа Георгий Федорович Прокопьевсен сăмахĕсем чашăксене чей тултарнă май.

Çапла пултăрччĕ!

**А. ПЕТРОВ.**

Килти хушма хуçалăх

## Колорадо нăррипе кĕрешме

Çĕр улми ӳстерекене паян хумхантаракан тĕп шухăш – çак культурăна колорадо нăррин мăшкăлĕ пулма парас марри. Çак сăтăрçăпа тĕрлĕ майпа кĕрешме пулать: химилле майпа тата биологилле меслетпе. Паян помидор çеçки çинче чарăнса тăрар-ха. Интересленекенсем тĕрĕслесе пăхăр.

## Помидор çеçки

Помидор çеçкине 3 кг чухлĕ илсе вĕтетмелле, унта 10 литр шыв хушмалла, хыççăн 30 минут вĕретмелле. Тăрăлтармалла, сăрăхтармалла. Çĕр улмин çеçкисене сирпĕтме 2 литр хатĕр шĕвеке 10 литр шывпа хутăштараççĕ тата 40 грамм супăнь хушаççĕ.